**7. Çеçпĕл Мишши.** «Хурçă шанчăк», «Чăваш чĕлхи», «Иртнĕ самана», «Пуласси» сăвăсем. Крым сăввисем («Катаран каç килсен», «Инçе çинче уйра уяр...», «Çĕн кун аки», «Тинĕсе»). Сăвăç çинчен каланă сăмах.Çеçпĕл Мишши – чăваш литературин классикĕ. Пурнăçĕпе пултарулăхĕ. Лирика геройĕ. Кĕрешӳçĕ Этем сăнарĕ. Илемлĕх мелĕсем.**
**8. Илле Тăхти.** «Элихун» поэма. «Чăваш поэчĕсене мухтаса юрлани» (1925) сăвă. «Шерхулла» калав. Илле Тăхти ăсталăхĕн хăйне евĕрлĕхĕ. «Шерхулла» _ этнографилле калав. Сăнар тумалли мелсем.*
**9. Мĕтри Юман.** «Пӳлĕх йăмри» калав. «Шевле вылять» прозăлла сăвă, «Паттăр пулнă авалсем» ирĕклĕ сăвă. Сăвви-калавĕсен шăпи. «Пӳлĕх Йăмри» - ял сийĕсен пăлхавăрлă пурнăçне шахвăртуллă мелпе сăнарлакан хайлав. Калав тытăмĕ, сăнарĕсем, тĕп шухăшĕ.*

**10. Хумма Çеменĕ.** «Шишка» калав. «Штрум» повесть (1924). Хумма Çеменĕ – сăмах ăсти. «Шишка» калавăн кивелмен пахалăхĕ.**
**11. Исаев Мĕтри.** «Рабфак хĕрĕ» калав. Мĕтри Исаев (Авраль) – чăваш прозин талантлă ăсти. Пултарулăхĕпе пурнăçĕ. «Рабфак хĕрĕ» калавра хускатнă ыйтусен çивĕчлĕхĕ.*
**12. Иван Мучи.** «Хурах, хут вĕрентеççĕ!», «Шыракан тупаймарĕ», «Чышкă тытăмĕ» калавĕсем. Иван Мучи – кулăшпа питлев ăсти. Иван Мучи еткерĕн пĕлтерĕшĕ. Кулăша вăйлатмалли илемлĕх мелĕсем. Геройсен чĕлхи. Вĕсен шалти сăн-сăпатне тишкермелли мелсем.*
**13. И.С. Максимов-Кошкинский.** "Ачамăрсем" пьеса. «Пугачев парни» драма. Драматург, çыравçă, артист, режиссер, наци театрне никĕслекенĕ, «Чăвашкинона» йĕркелекенĕ. Чăваш кино аталанăвĕ.**
**14. Виктор Рсай.** "О, хĕвел" калав. Виктор Рсай - диалогпа монологăн, портретпа пейзажăн, символ-танлаштарупа литература пайрăмĕн ăсти.*
**15. Нестер Янкас.** «Ялта», «Юрă пуçламăшĕ» сăвăсен темисем. Яш-кĕрĕме халаллан͏ă сăвăсен сăнарлăхĕ. Лирика геройĕ - чăваш каччи _ пурнăç илемне хĕрÿ ĕç шавĕнче ширани.*
**16. Иван Ивник.** «Улма чăпар ут», «Юрăçсем» тата "Сывлăм йĕрĕ юлчĕ çырура..." (2014) кĕнекери пичетленмен сăввисем. Çыравçă пурнăçĕпе пултарулăхĕ. Хайлавĕсенчи юрăллă стиль туртăмĕсем. Вăл çырнă юрăсен пахалăхĕ. Унăн пултарулăхĕнчи фольклорлăх.**
**17. Илле Тукташ.** "Тăван çĕр-шыв", «Шурă кăвакарчăн», «Уйрăлу», «Шур Атăлта акăш ярăнать» сăвăсем. Илле Тукташ – юрă сăмахĕсен ăсти. Пултарулăхĕн тĕп енĕсем. Халăх сăмахлăхĕпе пĕлсе усă курниĕ Юрă сăмахĕсен хăйне евĕрлĕхĕ.**
**18. Ефрем Еллиев.** «Чĕн тилхепе», "Хапха" кĕске калавсем. "Пирĕн телейсем" (1992-1993) "Пирĕн телей çакнашкал" (1934-1937) ятпа сцена çине тухнă.Е. Еллиев _ паллă вĕрентÿçĕ, прозăпа драматурги ăсти. Пултарулăхĕн тĕп енĕсем. Калавсен философиллĕхĕ, "пĕчĕк çын" шăпи, вăрттăн шухăш.** **19. Андрей Петтоки** «Тĕнче кĕвви», "Çиçĕм", "Хула" сăвăсем. Кĕрешÿри хастарлăхĕ. Поэзири авангардизм.*
**20. Валентин Урташ.** «Пурăнас килет» поэма. «Укăлча умĕнче шурă хурăн», «Ма хитре-ши Шупашкар урамĕ.» сăвăсем тăрăх кĕвĕленĕ юрăсем. В.Урташ – юрă сăввисен ăсти, хăйне евĕрлĕ çыравçă. Пурнăçĕпе пултарулăхĕн паллăрах енĕсем. Валентин Урташ сăввисемпе поэмисен çынлăхĕпе çирĕплĕхĕ, çутă ĕненÿлĕхĕ. «Пурăнас килет» поэма пахалăхĕ. Сăнарсем. Вăхăтпа ĕмĕр.**
**21. Максим Данилов-Чалдун.** "Çăлтăрлă çĕлĕк" пьеса. "Красноармеец Самсонов", "Лизавета Егоровна" калавсем. Çыравçăн кĕрешÿллĕ кун-çулĕ. Унăн пултарулăхĕнчи тĕп темăсемпе шухăшсем. Пĕчĕк калав ăсти. «Лизавета Егоровна» калав – вăрçă эпикин кăтартуллă тĕслĕхĕ.*
**22. Николай Евдокимов**. «Картара», Пичеври лашапа тĕпри лаша» юптарусем. Чăваш юптаруçин ăсталăхĕ. Врач-çыравçăн юптарĕвĕсен витĕмлĕхĕ.*
**23. Марк Аттай.** «Такапа Шапа» юптару. Сатирăллă поэзири жанр шыравĕсем (сатирăллă сăвă, юптару, поэма, пароди). Юптарусенчи шухăш, чĕлхипе сăнарлăх хăй евĕрлĕхĕ.*
**24. Александр Алка.** «Июнĕн 22-мĕшĕ», «Брандербург хапхи умĕнче» сăвăсем. «Кĕвентеллĕ хĕр» легенда. Чăваш халăх сăвăçин Александр Алган пурнăçĕпе пултарулăхĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи хайлавсен паттăрлăх хавхи. Паттăр салтак сăнарĕ. «Тăвата çулталăк» кĕнекери сăвăсен янăравлăхĕ. **
**25. Петĕр Хусанкай.** «Аптраман тавраш» сăвăлла роман сыпăкĕ. «Çĕнтерÿ юррисем» ярăмри сăвăсем. Чăваш халăх çыравçин пурнăçĕпе пултарулăхĕн тĕп тапхăрĕсем. Çĕр-шыв паттăрĕсене мухтакан хайлавсем. Лирика хайлавĕсенче çыравçăсем чăваш чĕлхин илемĕпе, янăравлăхĕпе савăнса мухтанни, тăван чĕлхене тиркекен, уншăн тăрăшман çынсене питлени.**
**26. Александр Артемьев.** «Симĕс ылтăн» повесть. Чăваш халăх çыравçин А.С.Артемьевăн çар ыйтăвĕпе çырнă хайлавĕсем. Пултарулăхĕн тĕп енĕсем. «Симĕс ылтăн» повесть _ салтак чăтăмлăхне, çирĕплĕхне, тасалăхне мухтакан хайлав. Повеçĕн ырлăхĕ, шухăш тарăнлăхĕ. Тĕп сăнарсем.**

## 6 пай. XX ĔМĔРĔН ИККМĔШ ÇУРРИНЧИ ЛИТЕРАТУРĂРАН (1955–2000) (45 сехет)

1. **Ухсай Яккăвĕ.** «Çумăр», «Анне мана тирпейлĕ пиеленĕ» сăвăсем. «Аттеанне» поэма сыпăкĕ. Чăваш халăх сăвăçин нумай енлĕ пултарулăхĕ. Эпикăллă лирика ăсти. Çынпа çут çанталăка юратса çырнă сăввисемпе поэмисен пахалăхĕ.**

**2. Александра Лазарева.** «Пирвайхи юрату» калав. Александра Лазарева пултарулăхĕнчи пурнăçри пулăмсем палăрса юлни. Калав пахалăхĕ. Сăнарсем. Çынлăх ыйтăвĕсем.*

**3. Илпек Микулайĕ.** «Госпитальте» калав. «Вăрçă калавĕсем» кĕнекери хайлавсем. Чăваш халăх çыравçин хайлавĕсенчи паттăрлăхпа тивĕçлĕх ыйтăвĕсем.**

**4. Николай Терентьев.** «Çĕрпе хĕр» легенда драма сыпăкĕ. «Атăл куçĕ» драма сыпăкĕ. Чăваш халăх çыравçи, талантлă драматург. Драматургири çĕнĕлĕхĕсем. «Çил çинчи çеçпĕл» драма _ ашшĕсемпе ачисен ĕмĕрхи хутшăнăвĕсене уçса паракан хайлав. Конфликт, сăнарсем.**

**5. Юрий Скворцов.** «Хĕрлĕ мăкăнь» повесть. Литература _ çын чунне, шалти тĕнчине уçса кăтартакан сăмах ÿнерĕ. Ю.Скворцов – талантлă прозаик. Пултарулăхĕн паха енĕсем. «Хĕрлĕ мăкăнь» повеçре хускатнă ыйтусем.**

**6. Уйăп Мишши.** «Салтак амăшĕ» поэма сыпăкĕсем. Ăшă лиризм, героика романтики. Амăшĕн тата салтаксен сăнарĕсен уйрăмлăхĕсем.*

**7. Леонид Агаков.** «Юманлăхра çапла пулнă» повесть сыпăкĕсем. Чăваш халăх çыравçи. Пултарулăхĕн тĕп енĕсем. Повеçри дедектив сăмахлăхĕн ырă тĕслĕхĕ. Сюжет йĕрĕсем, сăнарсем. Хутлăхри йĕркене тытса пырасси.**

**8. Василий Алентей.** «Хырсем ĕмĕрех ем-ешĕл», «Хĕрлĕ кĕпе» повесть сыпăкĕсем. Чăваш халăх çыравçин пурнăçĕпе литературăри ĕçĕ-хĕлĕ. Хайлавсенче хускатнă ыйтусем, шухăшсем, темăсем. Пурнăçра кирлĕ ыйтусем пирки ăшпиллĕн калаçни.**

**9. Митта Ваçлейĕ.** «Çĕр-шывăм, çĕр-шывăм...», «Тав сана», «Анатри юрă» сăвăсем. «Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем... »,«Ан тив, хисеп те чыс та ан курам». Митта Ваçлейĕ – чăваш поэзийĕн классикĕ. Пурнăçĕн йывăр çулĕсем. Унăн лирикин афоризмлăхĕ, шухăшĕ. Пурнăçпа тачă çыхăнни.** Митта Ваçлейĕ – чăваш поэзийĕн классикĕ. Пурнăçĕн йывăр çулĕсем. Унăн лирикин афоризмлăхĕ, шухăшĕ. Пурнăçпа тачă çыхăнни.**

**10. Мĕтри Кипек.** «Ягуар» калав (пьесăпа киносценари хушшинчи пĕр пеклĕхсемпе уйрăмлăхсем). Тăван çĕршыва хÿтĕлекен салтакăн хастарлăхĕ, вăл вилĕме хирĕç тухса паттăрлăх çулне суйласа илни. **

**11. Юхма Мишши.** «Шурçамка» повесть сыпакĕ.** Хайлав темипе проблеми. Сăнарсен хăйне евĕрлĕхĕ. «Кăвак çĕмрен» повесть сыпăкĕ.* Чăваш халăх çыравçин тĕрлĕ тĕссемлĕ (мифла, халап-юмахлă, фольклорлă) историлле хайлавсен вырăнĕ. Сăнарсен характерĕсем, ырă тата сивлек сăнарсене калăпланă мелсем.*

**12. Николай Айзман.** «Ăçта-ши ман атте.» драма сыпăкĕсем. Чăваш шилĕк ăстин, драматургăн паллăрах пьесисем. «Ăçта-ши ман атте?» драма темипе тĕп шухăшĕ. Кашни çын хăй пурнăçĕшĕн хăй яваплă пулни. Тĕрĕслĕхпе тÿрĕлĕх çĕнтеретех.**

**13. Лаврентий Таллеров.** «Пысăк тĕнчери пĕр пĕчĕк чун» калав.** «Юхать юхан-шыв» повесть сыпăкĕ. «Çÿл тÿпере çич çăлтăр» сăвăсем. «Шеремет» роман сыпăкĕ.* Чăваш халăх писателĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕн паллăрах тапхăрĕсем. Проза ăсталăхĕ, этем чунне уçса пани, илемпе тасалăх туйăмĕ, ăс-хакăлпа çынлăх ыйтăвĕсем, çынсен хутшăнăвĕсем.

**14. Георгий Орлов.** «Салтак эп пулнă», «Виçесĕр пысăк пек каçалăкĕ» сăвăсем. Пултарулăхĕн тĕп паллисем. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи çыравçă хайлавĕсенче сăнланни. Психологилле тĕрĕслĕх. Салтак шухăш-кăмăлне уçса кăтартни. Вăрçă суранĕ.*

**15. Георгий Ефимов.** «Чĕрĕ тымар хунав кăларатех», «Шурă чул айĕнче тапакан çăл» повесть сыпăкĕсем. Чăваш халăх поэчĕ, паллă сăвăç, прозаик, юрă сăмахçи. Хайлавсен тематики, тĕп шухăшĕ, сăнарсем.**

**16. Нелли Петровская.** «Çухатнă чыс», «Шурă лили» повесть сыпăкěсем. Пултаруллă чăваш çыравçи, повеçсемпе романсен ăсти. Чыспа тасалăх, ěретнесěп, кăмăл-сипет темăсен хиврелěхě.. Черченлěх (сентиментализм) туртăмěллě повеçсенчи сăнарсем.*
**17. Георгий Краснов.** «Тинěсре тупнă çěрě», «Кивě шывармань» повесть сыпăкěсем. Георгий Краснов - чăваш литературинчи наукăпа фантастика, приключени жанрне аталантараканě. Хайласен тěп туртăмěсем, сăнарсен ушкăнěсем, сюжет хиврелěхě.*
**18. Розин Ярандай.** «Кěмěл сулăллă сехет», «Йěрсем çухалмаççě»» «Сăпса йăви» повесть сыпăкěсем. Пултарулăхěн паллăрах енěсем. Дедективлă жанра аталантаракан çыравçă. Хайлавсен компорзицийěпе сюжет йěрěсенче хирěçўллěхпе психологиллě мелсемпе ăнăçлă усă курни. Тěп сăнарăн хăйне евěрлěхě. Кирек мěнле пăтрашуллă преступленине те вăл следовательпе пěрле тěпчесе пěлни, вăрă-хурахсене тăрă шыв çине кăларни.**
19. Виталий Енěш. «Кěлě - пирěн хўтлěх ěмěр», «Эй, Турă этемўсене, çăл!» тěрленчěксем. «Пурçăн йăлмак», «Ылтăн хырăм» повесть сыпăкěсем. Пултарулăхěн тěп енěсем. Хайлавсенчи сăнарсен хастар ěç-хěлне, вěсен пархатарлă шухăш-кăмăлне çутатса пани. Ырăпа илем, усалпа сутăнчăклăхыйтăвěсем пирки шухăшлаттарни.*
**20. Денис Гордеев.** «Шăннă куççуль» калав. «Çич çунатлă курак» кěнекери сыпăксем. Сăмах ăстин пурнăçěпе пултарулăхěн тěп тапхăрěсем. Самана улшăнăвне тěпчекен автор. Этемěн çут çанталăкри, обществори вырăнě çинчен шухăшлаттарни.*
21. Ваçлей Игнатьев. «Каçхи юр» (1964), «Кěмěл туйипа усрав ача» калавсем. Çыравçăн паллăрах хайлавěсенчи чун тасалăхěпе çынлăх туйăмне çěклени. Ырă кăмăллă, ăшă чунлă сăнарсем пысăк йывăрлăхсем чăтса ирттерсе, пурнăçри кăткăс ыйтусене татса пани.**
**22. Николай Максимов.** «Пин-пин хěрлě роза» повесть сыпăкě. Çыравçă пултарулăхěн тěп тапхăрěсем. Паллăрах хайлавěсенчи тема, проблема çамрăксен ěрет-несěп ыйтăвěсене татса пама ăнтăлни. Сăнарпа конфликт ăсталăхě.*
**23. Геннадий Айхи.** «Суйласа илнисем» кěнекери хайлавсем. Чăваш халăх поэчěн пурнăçě пултарулăхěн тěп енěсем. Малтанхи кěнекисем. «Авангардизм» шыравěсем. Пуян кěвěллě, тарăн туйăмлă сăвăсенчи лирика геройě.*
**24. Николай Теветкел.** «Юман» триптрих. «Атăл куçěсем» сонет ярăмě. Сăвăç лирики чун-чěре çуменчи çепěçлěхе хускатни. Тăван çěр-шыва юратнине чěрě пайрăмсемпе куçа курăнмалла сăнласа пани, тарăн шухăша яни.*
**25. Николай Исмуков.** „Тěттěм „Турккă каçне“ мěн çитейě.” („Хырай çумěпеле“ ярăмран). „Мала утмашкăн малаллах пăхатăн“ сăвă. Чăваш халăх поэчěн пурнăçěпе пултарулăхěн тěп енěсем. Пурнăçри кăткăс ыйтусене татса пани.**
**26. Юлия Силэм.** «Вăрçă ачисем», „Ывăлăм“ калавсем. Вăрçă-харçă, ашшě-амăшě тата ачисем темăсене философи тарăнлăхěпе, ăсхакăл тěпчевлěхěпе, чун-чěре ирěклěхěпе уçса пани.*
**27. Петěр Эйзин.** «Савни юррисем» ярăмри сăвăсем. Пурнăçěпе литературăри ěçě-хěлě, пултарулăхěн паллă енěсем. Темăпа шухăш пуянлăхě. Пуян кěвěллě, тарăн туйăмлă, шыравлă чěрě сăнлăхсем.**
**28. Николай Ишентей.** «Çуралман ача сасси» (1993) поэма-метафора сыпăкě. Çыравçăн тěрлě енлě пултарулăхě. Лирикăллă чун уççипе сěтекленнě, психологи техěмленнě хайлавсен сăнарлă шухăш тытăмě.**
**29. Юрий Сементер.** «Амăшě ывăлěн палăкěпе калаçни». Чăваш халăх поэчěн пурнăçěпе пултарулăхěн паллăрах енěсем. Салтак сăвви-поэми. Поэзири философилле çынлăх ыйтăвěсем тарăнланни, пурнăçпа вилěм маларах тухса пыни.**
**30. Михаил Сунтал.** «Тăм чěлхе», «Тухатмăш» «Аваллăх ахрăмě», «Мăн ту вăрттăнлăхě» фантастикăлла калавсем. Чăваш эпикинче наукăпа фантастика, приключени жанрне алла илнě прозаик пултарулăхě. Наукăпа пурнăç тупсăмěпе вăрттăнлăхěсене шырани.**
**31. Энтип Ваççи.** Илěртўллě илем [повеçсем, калавсем, эссесем, статьясем] кěнекери хайлавсем. Халăх çынлăхěпе, чунлăхě, тараватлăхěпе пархатарě çинчен çырнă тěрлě жанрлă хайлавсем. Илемпе шухăш шыравěсем.* 32. Петěр Яккусен. «Кěмěл кимě» кěнекери сăвăсем.

Пултарулăхăн тĕп енĕсем. Вăхăтпа çын пĕрлĕхне шухăшлавлă ăнлантаракан поэзи. Халăхла тĕнчекурăмпа сăнарлăха кĕскен те татăклăн калани.*

**33. Борис Чиндыков.** «Хутлă канфет», „Халал - 468“, “Элчел“, „Нараста“ калавĕсем. Пултарулăхĕн тĕп тапхăрĕсем. Çыравçăн тĕрлĕ енлĕ таланчĕ. Чăваш прозине çĕнĕ шухăш, сăнар, хаксем илсе килни. Çĕнĕлле характер, çĕнĕлле лару-тăрăва кăтартмалли илемлĕх мелĕсем шырани. *

**34. Николай Симунов**. „Ан йĕр эсĕ, Лена“ роман сыпăкĕсем. Пултарулăхĕн тĕп тапхăрĕсем. Хайлав сюжечĕн хиврелĕхĕ, дедективлăх, драмăлăх, трагедиллĕх паллисем. Ăнсăртлăх мелĕпе хайланă таса чунлă сăнарсен хӳтлĕхсĕр шăпи. Пурнăç тĕпчевĕ урлă тухнă икĕ пĕртăван пурнăçĕ, телейĕ, мал ĕмĕчĕ, лайăххи патне туртăнни.**

## 7 пай. XX1 ĔМĔР ПУÇЛАМĂШĔНЧИ ЛИТЕРАТУРĂРАН (2000-2010) (7 сехет)

**1. Валери Туркай.** «Ку эпĕ - Валери Туркай» кĕнекери сăвăсем. Чăваш халăх поэчĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ. Танлăх-чыслăх, самана таппине палăртакан кĕрешӳ кĕввиллĕ хайлавсем чăваш поэзине витĕм кӳни. Халăха, çĕр-шыв кун-çулне, хальхи çын чунне уçса паракан хайлавсем, вĕсен поэтики.**

**2. Николай Максимов.** «Шур акăш çулĕ» роман сыпăкĕсем. «Пĕр хĕрес айĕнче» повесть сыпăкĕ.

**3. Сергей Павлов.** «Шупашкар кулачĕ» кĕнекери калавсем. «Хаяр ытам» повесть сыпăкĕсем. Чăваш халăх çыравçин пурнăçĕпе пултарулăхĕн паллăрах енĕсем. Хйлавсенче хускатнă проблемăсем.**

**4. Арсений Тарасов.** «Мунча кунĕ» драма сыпăкĕсем. Хайласенчи тĕп туртăмĕсем, сăнарсен ушкăнĕсем, сюжет хиврелĕхĕ. Герой сăн-сăпатне, кунçулне, ашшĕ-амăш витĕмне, социаллă хирĕçӳсене, ял-йыш йăли-йĕркине психологилле çивĕч лару-тăрура уçса пани.*

**5. Геннадий Максимов.** «Ачаллă хĕр арăм» («Сталин грамоти»), «Амăшĕ пехилĕ» («Çĕрĕллĕ хура кушак» кĕнекери) калавсем. Хайлавсен жанрĕ, тематики. Паянхи пурнăç ыйтăвĕсем, пурнăç хирĕçӳлĕхĕсем. Сăнарсен хăйнеевĕрлĕхĕ.**

**6. Геннадий Медведев.** «Амаçури» драма сыпăкĕсем. Психологилле драма уйрăмлăхĕсем, тата моральпе чыслăх ыйтăвĕсем. Шухăшпа сăнарлăх шыравĕсем. Сама паллин типлă ӳкерчĕкĕсем, типлă сăмахсем.*

**7. Улькка Эльмен.** «Ма инçе-ши, çăлтăрăм?», «Çăлатăпах, сана Вероника», «Сарă кĕпе» повесть сыпăкĕсем. Пултарулĕхĕн тĕп енĕсем. Паянхи çынсен пурнăçне-хутшăнăвне тĕпчекен автор. Çын чысне, чунне, этемлĕх упранă ырă кăмăл-туйăм пахалăхĕсене хӳтĕлекен çыравçă. **

**8. Людмила Сачкова.** «Чĕкеçĕм, чĕкеç» повесть сыпăкĕсем. «Сухал мучи» пьеса сыпăкĕ (1 пай). «Эсĕ кайрăн та...» драма сыпăкĕ. Телейпе ăраскал ыйтăвĕсене литературăпа философире тата кулленхи пурнăçра çутатни. Вăхăтпа çын. ,мĕтпе телей. Çыравçăн тĕнче курăмĕпе çырулăхĕ çыхăнса тăни.**

**9. Виталий Шемекеев.** «Тăварлă-çке хĕр арăм куççулĕ» повесть сыпăкĕ. Çыравçăн тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕ. Лирикăллă чун уççипе сĕткенленнĕ. психологи техĕмлĕ хайлавсен проблеми. Сăнар тăвас ăсталăх.*

**10. Марина Карягина.** «Кĕмĕл тумлă çар» трагеди сыпăкĕсем. Палиндронсем. Пултарулăх çул-йĕрĕ. Унăн малтанхи сăввисемпе калавĕсем. Пултарулăх ӳсĕмĕ. Çын сăнне уçса кăтартмалли сăнлăх мелĕсем. Çыннăн туйăм тĕнчине, шалти тĕнчине, тӳрремĕн мар дневник мелĕпе тишкернин пахалăхĕ.*

**11. Владимир Степанов.** «Пихампар йытти“, „Çĕлен“ („Чăваш“), „Юрату хăвачĕ“ фэнтези. «Демиург» мистикăллă калав. Тăван литературăри наукăпа фантастика, этномистика, фэнтези жанрĕпе çыракан прозаик. Чăваш мифологине чĕрĕ сывлăш кĕртнĕ, çут тĕнче чăваш тĕнчинчен

пысăкрах  пулнине тĕпчекен, тем те пĕр пĕлме юратакан ăамрăксен сăнарĕсем. Аллегори мелĕпе шăнăрланă çурма çынсемпе çурма чĕр чунсен сăнарĕсем.**
**12. Надежда Ильина.** «Турăсăр тупнă телей», «Даниил», «Хĕр кĕлетки», «Юлашки кĕр» калавсем. Çыравăçăн граждăнла позицийĕ. Идейăпа поэтика çĕнĕлĕхĕсем. Халăхпа культура аталанăвĕ мĕнле çул-йĕрпе пырнине пĕтĕмлетсе хаклакан хайлавсем. Хайлавсенчи шухăш-ыратăвĕ, пуласлăхĕ, шăпи. Притча майĕ-мелĕсен йĕрĕсем.
**13. Елен Нарпи.** «Турамăш çуралнă кунĕ», «Çÿпçе тĕпĕнчи çылăх» калавсем. Пултарулăхĕн паллăрах енĕсем. Хайлавсенчи философи, ĕретпенесĕп ыйтăвĕсем тата сăнарпа конфликт ăсталăхĕ. Илемлĕ шухăшлавпа сăнар тăвас уйрăмлăхсем.*
**14. Георгий Краснов.** «Хĕрлĕ тюльпан» повесть сыпăкĕ. Хайлаври хиврe сюжет йĕрĕ, çамрăксен сăнарĕсем урлă çынлăх, тасалăх, кăмăл-сипет проблемисен кăткăс ыйтăвĕсене çивĕччĕн лартни.**

**8 пай. ТĂВАН ЛИТЕРАТУРА ТĔНЧЕ ШАЙНЕ САРĂЛНИ (5 сехет) Тăван чĕлхе поэзийĕ тĕрлĕ чĕлхепе. Тĕнче поэзийĕ чăвашла**

1. Венгри чĕлхипе янăракан чăваш поэзийĕ (1985) Венгри поэзийĕ чăвашла янăрать (1974). Чăваш сăвăçисен хайлавĕсенчи тĕп туртăмсем. Халăх ăс-тăнĕнче ĕрет-несĕплĕх, чыс-хисеплĕх виçисем.
2. Итали чĕлхипе янăракан чăваш поэзийĕ (1986). Итали поэзийĕ чăвашла янăрать (1986). Чăваш сăвăçисен хайлавĕсенчи тĕп туртăмсем. Çут çанталăк, ĕмĕрлĕх, юрату, пурнăçпа вилĕм хускатан хайлавсем.
3.Акăлчан чĕлхипе янăракан чăваш поэзийĕ (1991). Акăлчан поэзийĕ чăвашла янăрать (1991). Чăваш сăвăçисен хайлавĕсенчи тĕп туртăмсем. Аслă ăру ĕçĕ-хĕлĕ.
4. Францi чĕлхипе янăракан чăваш поэзийĕ (1999). Франци поэзийĕ чăвашла янăрать (1968). Чăваш сăвăçисен хайлавĕсенчи поэзи çĕнĕлĕхĕ тата илемпе шухăш шыравĕсем.
5.Швеци чĕлхипе янăракан чăваш поэзийĕ (2004).
6. Польша поэзийĕ чăвашла янăрать (1987).

**9 пай. ТĂВАНЛА ХАЛĂХ ÇЫРАВÇИСЕМ: ТĔРĔК ХАЛĂХ ЛИТЕРАТУРИНЧЕН (8 сехет)**

**1.Тутар литературинчен.** Габдула Тукай. «Шурале». Ухсай Яккăвĕ куçарнă. Гариф Ахунов. „Çÿç пĕрчи“ калав. Вырăсларан Александр Галкин  куçарнă. Ренат Мухамадиев. „Кăмăл“ калав. Вырăсларан Михаил Лашин куçарнă.
**2. Пушкăрт литературинчен.** Ямиль Мустафин. Тайфун („Кăвак урхамах“ повесть сыпăкĕ). Вырăсларан Валем Ахун куçарнă. Амир Гареев. Тăварлă сывлăш. Вырăсларан Валем Ахун куçарнă. Вырăсларан Валем Ахун куçарнă. Сафун Алибаев. Кайăксенчен ырра эп вĕренетĕп. Вырăсларан Юрий Петров куçарнă. Равиль Бикбаев. Çыран хĕрринчи вилĕ çăхан. Вырăсларан Георгий Ефимов куçарнă. Назар Наджми. Çÿнес çук вучах. Вырăсларан Георгий Ефимов куçарнă. Катиба Киньябулатова. Чей. Вырăсларан Георгий Ефимов куçарнă. Сафи Кудаш. Кĕр мăнтăрĕ. Вырăсларан Юрий Петров куçарнă. Вазих Исхаков. Солттан пичче. Вырăсларан Владимир Ухли куçарнă. Мустай Карим. Çаврăнать кăруççель... Вырăсларан Алексей Воробьев куçарнă. 3. Кăркăс литературинчен.
**3. Кăркăс литературинчен**. Чингиз Айтматов. «Тĕве куçĕ» калав. Вырăсларан Леонид Агаков куçарнă. Аалы Токомбаев. „Тăван çĕршыв телейĕ” сăвă. Вырăсларан Петĕр Хусанкай куçарнă.
**4. Казах литературинчен.** Сырбай Муленов. „Тăванлăх юрри“ сăвă. Вырăсларан Аристарх Дмитриев куçарнă. Саин Муратбеков. „Çĕнĕ юр“, „Пĕрскер“ калавсем. Вырăсларан Анатолий Емельянов куçарнă. Абай Кунанбаев „Поэзи вăл - тĕлĕнмелле хăват“ сăвă. Вырăсларан Александ

Алка куçарнă. „Эс çамрăкчĕ, сан чĕрўнте....“ сăвă. Вырăсларан Александр Кăлкан куçарнă. „Юрату пирки чунăм çунать“ сăвă. Вырăсларан Георгий Ефимов куçарнă.
**5. Узбек литературинчен.** Алишер Навои. Газельсем. Вырăсларан Стихван Шавлы куçарнă. Асап çинчен ыйтмасăрах эс ман ăша хыптартăн. Вырăсларан Илле Тукташ куçарнă. Мухамед Салих. „Енчен те йывăç та поэт пулса тăрсан...“ Вырăсларан Борис Чиндыков куçарнă. Хамид Алимджан. Россия. Вырăсларан Петĕр Хусанкай куçарнă. Айбек. „Сăрт-тусем” сăвă. Вырăсларан Юрий Сементер куçарнă.
**6. Туркмен литературинчен.** Махтункули. „Чăнлăх” сăвă. Вырăсларан Юрий Сементер куçарнă. Дуры Клыч. „Турменистан“ сăвă. Вырăсларан Николай Евстафьев куçарнă. Ата Атаджанов. Симĕс чей. Вырăсларан Николай Евстафьев куçарнă. Ата Атаджанов. Тупа. Вырăсларан Николай Сандров куçарнă. Махтункули. „Чăнлăх” сăвă. Вырăсларан Юрий Сементер куçарнă.
**7. Азербайджан литературинчен.** Наби Хазри. „Сăмах”. Вырăсларан Юрий Сементер куçарнă. „Чинара“ Вырăсларан Николай Сандров куçарнă. „Тинĕс мансăр“. Вырăсларан Николай Сандров куçарнă. Сулейман Рустам. Ялан эп... Тусем. Вырăсларан Алексей Афанасьев куçарнă. Идаят. Çапла пурăнатăп. Вырăсларан Алексей Афанасьев куçарнă. Расул Рза. Баку. Вырăсларан Петĕр Хусанкай куçарнă. Гусейн Ариф. Калаçу. Фамиль Мехти. Мĕншĕн çут тĕнчере пурăнатăн? Вырăсларан Петĕр Хусанкай куçарнă.
**8. Хакас литературинчен.** Михаил Килтчанов. „Аякри тăвансем“ сăвă. Вырăсларан Юрий Сементер куçарнă.
**9. Якут литературинчен.** Платон Ойунский „Тăпăр-тăпăр ташлама” сăвă. Вырăсларан Юрий Сементер куçарнă. Петр Хорунский. «Çутă ылтăнран хаклăрах». «Нуша килсен йывăç çине те улăхатăн». «Мĕн акатăн çав шăтать» калавсем. Раиса Сарпи куçарнă.

**10 пай. 1.Чăваш çыравçисем чĕр чунсем çинчен.**

Трубина Мархви. „Чăхпа кушак“ калав.
Георгий Орлов. „Çерçи“ тĕрленчĕк.
Ева Лисина. «Пăркка мучи» калавĕсем. («Мускав кушакне вилме памарăм» калав).
Николай Ишентей. „Чĕп хуралĕнче“ сăвă.
Нелли Петровская. "Качака" калав.
Нестер Янкас. "Вихтăрпа шăнкăрч" сăвă.
Александр Угольников. „Хура ĕне” калав.
Иван Ивник. „Юрăçсем“ сăвă.
Николай Мăскал. „Выльăх чĕлхи“ сăвă.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи ачасен сăнарĕсем. Чĕрĕ чунсемпе этем хушшинчи туслăх. Çĕр çинчи пур чĕр чуна упраса хăварас, юратас, шеллес, хўтĕлес туйăма аталантарас шухăшсем. Çак сăнарсен кулăшла ĕçĕсем, хуйхи-суйхи. Хайлавсен тĕсĕсем, жанрĕсем.

**2. Чăваш çыравçисем тăван кил, туслă çемье, аслисемпе кĕçĕннисен кăмăл-сипет сыпăнăвĕ çинчен.**

Юрий Скворцов. Амаçури анне“ калав.
Геннадий Волков. „Ăслă ача“ калав.
Иван Яковлев.„Çемйĕре лайăх пăхса усрăр...(„Халал“ сыпăкĕ).
Николай Теветкел. „Карттă” сăвă.
Людмила Сачкова. „Çиçĕм Натюш“ калав.
Валерий Раштав.“Аннен çуралнă кунĕ“ сăвă.

Хветĕр Акивер. "Хĕвел" калав.
Юрий Сементер. „Амăшĕн чунĕ“ сăвă.
Алексей Аттил. „Йăмăка“ сăвă.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи ачасемпе пысăккисен сăнарĕсем. Тăван кил - ăсталăх вырăнĕ, кил ăшши, чун ăшши. Чи çывăх тăвансен юратăвĕ, ашшĕ-амăшĕ тăван ачана ăслă-тăнлă çын тăвас тесе пулăшни. Çамрăксемпе ваттисем хушшинчи çураçулăх. Хайлав тытăмĕнчен шалти саккунĕнчен жанр тĕсĕ тухни.

**3. Чăваш çыравçисен чăваш халăхĕн маттур ывăлĕсемпе хĕрĕсем çинчен. Халăх паттăрĕсем литература сăнарĕсем пулса тăни.**

Порфирий Афанасьев. „Кăйкăр“ поэма сыпăкĕ.
Тихăн Петĕркки. „Çутталла“ („Кушкă ачи“ поесть сыпăкĕн) инсценировки.
Валентин Урташ. „Прохор Иванов“ поэма.
Галина Матвеева. „Чăваш“ поэма сыпăкĕ.
Валентин Бурнаевский. „Симĕс генерал“ калав.
Георгий Ефимов. „Сăпка“ сăвă.
Петĕр Хусанкай. „Тезаврус лингве чувашорум“ сăвă.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи чăн пурнăçра пулнă, халăхшăн тунă ĕçĕсемпе чапа тухнă паллă çынсем çинчен. Халăх паттăрĕсем литература сăнарĕсем пулса тăни. Хайлав тытăмĕнчен, ĕçĕсемпе сăнарĕсенчен жанр тĕсĕ тухни.

**4. Чăваш çыравçисен мал ĕмĕтлĕ, таса чунлă çынсем çинчен.**

Мария Ухсай. „Ирхи сывлăм“ калав.
Петĕр Ялкир. „Интермедисем“.
Марина Карягина. „Слива вăрри “ калав.
Хветĕр Уяр. „Эсир Куçука курман-и ?“ калав.
„Ӳкĕт“ хайлав (Иван Яковлев букварĕнчен).
Геннадий Айхи. „Кĕске халал“ сăвă.
Исмай Исемпек. „Чун хуралçи“ калав.
Валерий Михайлов. „Ватта сума су“ инсценировка.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенче çын пурнăçне тĕрлĕ лару-тăрура, ĕçре-хĕнре кăтартни. Ырăпа юнашар ялан усал çӳрет шухăша аталантарни. Халăх кăмăлĕн ырă енĕсене йышăнмалла пирки пĕтĕмлетӳсем туни. Хайлав ăшĕпе тытăмĕ.

**5. Чăваш çыравçисем ĕçченлĕх, тирпейлĕх, çирĕплĕх, тӳсĕмлĕх çинчен.**

Иван Егоров. „Ывăл“ калав.
Александр Галкин. „Икĕ сăнлă пурнăç“, „Çӳпĕ“ юптарусем.
Владимир Степанов. „Эксклюзивлă сăвăм“ калав.
Елизавета Осипова. „Пахчари хӳшĕ“ калав.
Василий Кервен. „Тӳсĕм“ сăвă.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи сăнарсем ĕçре ăса çивĕчлетнине, туслăх çуралнине, кăмăл пуянланнине, чун çирĕплĕхне туптани. Хайлав ăшĕпе тытăмĕ, ĕçĕсемпе сăнарсем.

**6. Чăваш çыравçисем çыннăн çĕр-шыв, тăван-пĕтен, чи çывăх çынсем умĕнчи (ăру çыхăнăвĕ) парăмсем çинчен.**

Лидия Сарине. „Цирк курма кайни“ калав.
Раиса Сарпи. „Эпĕ „тухатмăш карчăкпа паллашни“ калав.
Иван Яковлев. „Пĕр-пĕринпе сапăр пулăр“ („Халал“ сыпăкĕ).
Архип Александров. „Тĕрĕс тунă“ пьеса.
Юхма Мишши. „Путĕш Патян мыскарисем“ кулăшла калавсем.
Александр Кăлкан. „Панулми“ калав.
Антонина Васильева. „Çĕн кайăкпа кантраллă кукăль“ калав.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи аслисемпе ачасен сăнарĕсем. Аслисене хисеплеме, вĕрентсе каланине итлеме, йывăрлăхра пулăшма хăнăхса пыни, пурнăç тӳнтерлĕхĕсемпе килĕшменни, чун-чĕре тасалăхне упрани. Хайлавсен тĕсĕсем, жанрĕсем хайлав тытăмĕнчен, шалти саккунĕнчен, ĕçĕсенчен, сăнарсенчен жанр тĕсĕ тухни.

**7. Чăваш çыравçисен хайлавĕсенчи çут çанталăк илемне упрас шухăш-кăмăла аталантарасси çинчен.**

Валери Туркай. „Айăп“ калав.
Георгий Ефимов. „Хĕвел тухнă вăхăтра“ сăвă.
Максим Ястран. „Шăплăхра“ сăвă.
Ухсай Яккăвĕ. „Çĕмĕртсем çеçке çурсан“ сăвă.
Петĕр Вашават. „Вăйăран вăкăр тухать“ калав.
Арсений Тарасов. „Ăвăс хунавĕ“ калав.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи çут çанталăк пулăмĕсемпе тапхăрĕсене, илемне, тăван çĕре, тискер чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕк сăнарĕсене чĕрĕ пек сăнлани. Çыравçăсем вĕсем урлă этем тĕнчин вăрттăнлăхĕсене, ĕмĕрхи хаклăхсене кăтартса параççĕ.

**8. Чăваш çыравçисен хайлавĕсенчи общество пурнăçĕнчи кир евсĕр йăла-йĕрке этем сăн-сăпатне пĕтерни, çухатма пултарни çинчен.**

Любовь Мартьянова. „Ятсăр троллейбус“ калав.
Борис Чиндыков. „Аçу“ калав.
Александр Галкин. „Йывăр чир“ шӳт.
Анатолий Кипеч. „Ача çуртĕнче“ сăвă.
Аркадий Ĕçхĕл. „Урхамах“ калав.
Вениамин Тимаков. „Сывлăхпа Чир“ поэма сыпăкĕсем.

Ачасемпе пысăккисем валли çырнă хайлавсем сиенлĕ, киревсĕр йăла-йĕрке (пирус туртни, эрех-сăрапа иртĕхни) пăсăлса пынипе çыхăннă хайлавсем. Кулленхи пурнăç пăчăхĕнчен, халсăрлăхĕнчен хăтăлма сĕнни.

**9 . Чăваш çыравçисен хайлавĕсенчи халăхăн вăрçăри паттăрлăхĕ, тылри хастарлăхĕ çинчен.**

Николай Мартынов. „Юнлă çырла“ калав.
Ольга Туркай. „Пахчари çĕмĕрт“ новелла.
Сергей Павлов. „Ача вăйăи мар“ калав.
Александр Алка. „Ырă ят“ сăвă.
Хветĕр Уяр. „Тăвансем кĕтеççĕ“калав.

Виталий Саруй. „Тимĕр ешчĕк“ пьеса.
Николай Симунов. „Палăк“ калав.
Тĕрлĕ жанрлă хайлавсем. Вăрçă тискерлĕхĕ çын пурнăçне, ăс-халне, чун-чĕрине амантса хăварни. Вăрçăра пуç хунă юлашки салтака тирпейлесе пытарсан çеç хаяр вăрçă вут-çулăмĕ пĕтнине астутарни.

**III пай.**

**1. Чăвашçыравçисем çан-çурăмри, ăс-хакăлти, чунри, кăмăл-сипетри сывлăх-чĕрĕлĕх ыйтăвĕсене хускатни.**
Митта Ваçлейĕ. „И мĕн пуян...“ сăвă. Иван Лисаев. „Чире парăнма çуралман“ калав. Анатолий Смолин. „Ан вĕлер, ан суй, ан сут!“ сăвă. Людмила Сачкова. „Оля-Улькка“ калав. Александр Кăлкан. «Тăрлавсăр хăнтăр»,«Аташнăскерсем» „Хăравçă мулкач“, „Каппайчăк Пучах“ юптарусем. Денис Гордеев. „Кукăр алăсем“ калав. Петĕр Эйзин. „Кураканни курать“ сăвă. Юхма Мишши. „Çĕр улми аврипе мăян“ юптару. Ваçлей Игнатьев. „Кушак сухалĕ“ калав. Елен Нарпи. „Ултав“ калав. „Натали кĕпе çăвать“ реклама. Виталий Енĕш. „Ракеткăллă рекетирсем“ повесть сыпăкĕ. Валери Туркай. „Йывăр çын пулма“ сăвă. Валентин Николаев. „Чăх чĕппи - чемпион“ пьеса. Стихван Шавли. „Кам вăл.“ сăвă. Василий Петров. „Мулаххай“ калав. Юрий Скворцов. „Вĕреçĕлен“ калав. Геннадий Юмарт. „Чир“ сăвă. Лидия Сарине. „Çунашка пит кирлех мар.“
Ачасемпе пысăккисем валли çырнă хайлавсем кахал, хытă чунлă, йăпăлти, çын ĕçĕпе пурăнма пĕлекен, çăткăн, суеç, мухтанчăк çынсене питлени. Ырă мар йăла-йĕркене хирĕç кĕрешни, этеме хăйĕн.çитменлĕхĕсене çĕнтерме вĕрентни. Çамрăк ăрăва таса чунлă, ырă ĕмĕтлĕ, ăслă çынсем туса пăхса ÿстерес ыйтăва çĕклени. Хайлавсенчи ырă тата сивлек сăнарсем вулакана шухăшлама .

**2. Чăваш çыравçисем ăру - йăх хушшинчи хутшăнусем çинчен, ăрусен ырă тăсăмĕсем татăлни çинчен.**
Лидия Сарине. „Кукамай“ калав. Юрий Скворцов. „Ултăк“ калав. Антип Николаев. „Юрик асламăшĕ“ калав. Петĕр Эйзин. „Йăмрапа хурăн“ сăвă. Любовь Мартьянова. „Иккĕленÿ“ калав. Хветĕр Уяр. „Тимуш“ калав. Иван Яковлев. „Ватăсемпе çамрăксем“ дидактикăллă калав.“Вăрăпа амăшĕ“ юмах. Александр Волков. „Хăна“ калав. Елен Нарпи. „Тивĕç“ калав. Аркадий ,çхĕл. „Анне“ сăвă. Людмила Сачкова.“Ăмсану“ калав. Ева Лисина. «Çăкăр чĕлли», „Хĕле кĕрес умĕн“ калавсем. Валентина Тарават. „Марине мыскарисем“ кулăшла пĕчĕк калавсем.
Ачасемпе пысăккисем валли çырнă хайлавсенче ырăпа усала тĕрлĕ енлĕ Сăнлани. Çемьери хутшăнусем урлă чăн пурнăçри сăнарсене тÿррĕн тата символласа кăтартни. Сăнлас пултарулăх. Çăкăрпа çынна поэзире тата эпикăра сăнарлакан уйрăмлăхсем. Ватă-вĕтĕ хушшинчи хутшăну, аслисем кĕçĕннисене ăс пани, пурнăçа йĕркелесе пыни.

**3. Чăваш çыравç исем илемлĕх тупсăмĕпе формисене чĕрĕ çут çанталăкра, кулленхи пурнăçра шырани çинчен.**
Федор Павлов. «Хитре» статья. Геннадий Айхи. „Çын тата сцена“ сăвă. Валенти на Элпи. „Илемлĕхе курма п ÿ рнĕ а ча“ калав. Василий Кервен. „Илем“ рапсоди. Николай Исмуков. „Мăн улăхра кĕт ÿ çĕ“ („Хырай çумĕпеле“ ярăмран).
О. Савандеев. „Вăрманти концерт” калав. Алексей Аттил.“Илем“ сăвă. Марина Карягина.“Чатăр“ калав. Мария Ухсай. „Ташă“ сăвă. Герасим Харлампьев. „Каласа пĕтерес çук“ пĕчĕк калав. Валентина Элпи. „Тус пулар“ калав. Николай Кушманов. „Илем шыранă таврара“ сăвă. Геннадий Айхи. „Ир вилекен сăвăсене“ сăвă. Иван Лисаев. „Кайăксем вĕçеççĕ“ калав. Яков Рогачов. „Çÿлĕк“ калав. Юрий Скворцов. „Славик“ калав. Светлана Асамат. „Чăваш ташши, юрри - кĕтрет“ сăвă. Ваçлей Игнатьев. „Сĕрме купăс” калав. Арсений Тарасов. „Чăваш кĕпи” калав.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенче илемлĕхе курма, ăна пур çĕрте тетупма-туйма пĕлесси. Çыннăн чи кирлĕ Енĕсене аталантарма тăван литература пулăшни. Сăнарлăх - эстетика никĕсĕ пулнине ас тутарни. Эстетика туйăмне аталантарасси. Пурнăç чăнлăхĕпе илемне сăнласа кăтартасси, этеме пултаруллă та хитре чунлă пулма вĕрентесси.

**4. Чăваш çыравçисем шкул тулашĕнчи ĕç-хĕлпе тĕрлĕ профессире ырă ятлă, мухтава тивĕçлĕ çынсене сăнарлани.**

Алексей Вороьев. „Çăкăр, „Çурхи хирте“ сăвăсем. Валери Туркай. „Ниме“ сăвă. Василий Давыдов-Анатри. „Кĕтмен инкек“ калав* Валентина Элпи.„Водолаз“ „Аппапа пĕрле“ калав. Зоя Нестерова. „Янттине хапсăнсан“ калав. Мархва Трубина. „Концерт лартни“ калав. Исмай Исемпек. „Салтак курки“ калав. Георгий Краснов „Матрос карттусĕ“ калав. О. Савандеев. „Çĕлен мыскари“ калав. Леонид Маяксем „Сад коменданчĕ“ калав. Георгий Ефимов. „Лина Петровна“ калав. Вениамин Тимаков „Хăш предмет лайăхрах. („Аттемĕрĕн сăваплă çĕрĕ” повесть сыпăкĕсем). Антип Николаев. „Çĕрулми ăçта каять...“ калав. Лидия Филиппова. „Атя, тавлашар“ калав. Юлия Силэм. „Ăшхыппи“ калав. Василий Алентей. „Вăхăт хакĕ“ Калав. Сергей Петров. „6 А асанне шырать“ калав. Алексей Воробьев. „Шăрттан“ сăвă. Геннадий Волков. „Опера“ калав. Алексей Ильин. „Кулач” калав. Василий Петров. „Кăкшăм” калав. А.Никитин. „Утă çулни. Улюк” тĕрленчĕк.
Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенче ырăпа усал кĕрешĕвне сăнарлăн пани. Аслисемпе ачасем пĕр-пĕрне ăнланса, пулăшса пырсан çеç ĕç ăнать, ырă ят сарăлать. ,çрен хăраман, ырă ĕмĕтлĕ çынсемте телей тупнине калăплани.

**5 . Чăваш çыравçисем литература геройĕн пултарулăхĕ, ăс - хакăл, ăс - тăнĕ çинчен.**

Иван Ахрат. „Юрлакан кĕленчесем“ калав. Юрий Сементер. „Вилĕме улталани“ сăвăлла юмах. Людмила Сачкова. „Шăпăрлан“ пьеса. Алексей Трофимов. „Çырулла кĕпе“, „Асамлă паллăсем“ тĕрленчĕксем. Сергей Юшков. „Шăши“, „Критик-автан“ юптарусем. Алексей Афанасьев. „Пĕлĕтсем“ сăвă. Николай Симунов. „Çил мĕн тĕслĕ.” сăвă. Илпек Микулайĕ. „Тимĕр“ роман сыпăкĕсем. Петĕр Хусанкай. „Чăвашран Ньютонсем тухасса эп шанатăп“ тĕрленчĕк сыпăкĕсем. Арсений Тарасов. „Пенси укçи“ калав. Юрий Скворцов. „Палламан ача“, „Ми“ калавĕсем. Юрий Петров. „Лева карапĕ“ калав. Юрий Ермолаев.“Кулăшла инкек“ пьеса. Михаил Сунтал. „Йетти“ калав. В. Дмитриев. „Молекула“ пьеса. Петр Орлов. „Мыскара“ калав. Георгий Краснов. „Инçетри сасăсем“ повесть сыпăкĕ. „МИЭ-ка-УГЭ“ калав. Петр Емельянов. „Павăл. Хĕветĕр” калав.
Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенче литература сăнарĕсем çут çанталăк панă ăс-хакăла, тавçăрулăха, тавракурăма аталантарас тĕллевпе нумай вуламаллине, сăнамаллине тĕпчемеллине кăтартни. Пултаруллă, ĕçчен, сăпайлă, çирĕп характерлĕ, мал ĕмĕтлĕ пĕтĕмлетÿллĕ сăнарсем.

**6. Чăваш çыравçисем ытти халăх хушшинчи туслăхĕпе тăванлăхĕ (чăтăмлăхĕ), пĕр - пĕринпе килĕштерсе пурăнни çинчен.**

Александр Кăлкан. „Алим“ пьеса сыпăкĕ. Ольга Туркай. „Юлташпа - вăйсăрри те вăйлă“ калав. Порфирий Афанасьев. „Арçури“ калав. Илле Тăхти. „Васкă, Ванькка, Ахмет“ калав. Алексей Афанасьев. ”Пирĕн интернат“ поэма. Петр Семенов. „Садри лагерь“ калав. Владимир Ухли. „Пĕрремĕш сăвă“ калав. Валентина Элпи. „Тинĕс чечекĕ“ повесть сыпăкĕ. Михаил Сунтал.“Чăваш пĕтсен тĕнче пĕтет“ халап. Илпек Микулайĕ. „Шăллăм Индие каять“ калав. Юхма Мишши. „Хĕвел хăлхи“ тĕрленчĕк. Василий Игнатьев. „Пĕчĕк çулçÿревçĕ“ калав. Римма Прокопьева. „Пукрав”. Александр Савельев-Сас. „Артурпа унăн тусĕсем” повесть сыпăкĕсем. Светлана Асамат. „Намăс” сăвă.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенче тĕрлĕ халăх ывăлĕхĕрĕсен пархатарлă ĕç-хĕлне сăнлакан сăнарсем. Ачасемпе аслисен туслăхĕпе тăванлăхĕ Таса чунлăхĕпе ырă ĕмĕчĕ чăтăмлăхра, ăнланура, ĕçре, канура туптанни. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени тĕллеве пурнăçлама пулăшни. Литература - пурнăç тĕкĕрĕ.

**7. Чăваш çыравçисем пурнăçра тăван халăх ырлăхĕшĕн пуçарулла пулмалли çинчен.** Алексей Талвир. „Васкавлă çыру“ калав. Иван Саламбек. „Сармантей“ калав. Виталий Енĕш. „Çитсă кĕпе“ повесть сыпăкĕ. Герасим Харлампьев. „Энтри“ пьеса. Александр Галкин. „Чĕрĕ парне“ поэма сыпăкĕ.
Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи сăнарсем хăйсен хастарлăхне, чĕрĕлĕхĕпе чун-чĕрин ăс-хакăл пуянлăхне ĕрет-несĕп пахалăхĕсемпе халăх, çĕр-шыв умĕнчи парăмсене татнине ăста кăтартни. Халăхшăн ырă ĕç туни - тивĕç, телей, савăнăç.Харпăр хăй шухăшне хӳтĕлеме пултарни. Хайлавсенчи сăнарсен хастарлăхĕпе пуçарулăхĕ Пурнăç тыткăчи пулнине сăнлани.

**8.Чăваш çыравçисем çут çанталăк вăрттăнлăхĕсем пе кăсăкланма, йывăç курăка, кайăк - кĕшĕке, чĕр чунсене хĕрхенме, сыхлама вĕрентесси çинчен.**
Юрий Скворцов. „Хачăллă пулă“ калав. Николай Степанов. „Ондатра“ тĕрленчĕк. Федор Осипов. „Хавруç“ калав. Мĕтри Ваçлейĕ. „Çăрттанпа карас юлташланни“ калав. Георгий Ефимов. „Пыл хурчĕн миçе куç.“, „Кам пулă янă вара кунта.“ калавĕсем. Елен Нарпи. „Сĕт вăрри“ калав. Герасим Харлампьев. „Пăшăлтисем“ тĕрленчĕк. Михаил Белов. „Скорпионпа Тимĕр Шапа“ калав. Юхма Мишши. ”Çилçунат” новелла. Мĕтри Кипек. „Вăрман улăпĕ“ калав.
Этемпе тавралăхăн килĕшӳлĕхĕ. Тăван тăрăхри çут çанталăка упрасси, пуянлатасси, тĕпчесси. Çут çанталăк тасалăхĕ - сывлăх пахалăхĕ. Экологи проблемисем: пархатарлă çын этеме юратнипе çеç çырлахманни, çут çанталăк пуянлăхĕпе илемĕшĕн тăрăшни, ăна хими им-çамĕпе т.ыт. вараласа пĕтернине сивлени.

## IV пай

**1.Чăваш çыравçисем тăван халăхăн иртнĕ кун - çулĕпе пуласлăхĕ, унăн культури, йăлисемпе кăмăл - сипечĕн илемĕ çинчен.**

Çеçпĕл Мишши. „Иртнĕ самана, „Хурçă шанчăк“, „Пуласси“ сăвăсем. Çемен Элкер. «Хĕн-хур айĕнче» (малтанхи варианчĕ (1923-1928) эпикăллă поэма. Марина Карягина. „Тымарсăр туйра“ калав.
Митта Ваçлейĕ. „Хунран кайман-ши хунаса.“ сăвă. Николай Шелепи. „Уксах Тимĕр Пӳлере илни“ сăвăлла халап. Валери Туркай. „Чăваш тупи“, „Утăм хыççăн утăм - ирĕклĕх енне“ сăвăсем. Мария Ухсай. „Кăра çилсем“ повесть сыпăкĕ.
Леонид Агаков. Валерий Яковлев. „Вĕри чĕресем“ драма. Александр Артемьев. „Хунавлах хăрнисем“. Анатолий Смолин. „Аваллăх ани“ сăвă. Раиса Сарпи. „Римри тĕл пулу“ микропоэма.
Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсем халăх пусмăрçисене, çĕнĕ самана çыннин кĕрешĕвне тӳрĕ Тата куçăмлăн-сăнарлăн пĕтĕмлетни. Çĕнĕ саманашăн, çĕнĕ пурнăçшăн çапăçакан кĕрешӳçĕсен шухăшĕ-кăмăлĕ, туйăм тасалăхĕ, паттăрлăхĕ. Хайлавсенче XVIII ĕмĕрти чăваш ялĕ Сăнланни. Пăлхавлă тытăçусемпе чăваш хресченĕн кĕрешĕвне сăнарлăн пĕтĕмлетни.

**2. Чăваш çыравçисем сиенлĕ енсем этем сăнне, кăмăлĕпе шухăшне, ĕçне хĕлне улăштарни, тискерлетни çинчен.** Игнатий Иванов. „Çынна мулшăн туман, мула çыншăн тунă“ калав. Трубина Мархви. „Хăнаран“ калав. Виталий Енĕш. „Ракеткăллă рекетирсем“ калав. Геннадий Юмарт.“Выçă куç“ сăвă. Николай Ишентей „Мана пĕлетĕр (Черкке монологĕ)“ сăвă. Елен Нарпи. „Çылăхлă укçа“ калав. Григорий Луч. „Кама пăхнă-ши.“ трагикомеди. Юрий Скворцов. „Вĕреçĕлен“ калав. Валерий Самойлов. „Суеçĕ Микулай“ калав. Вениамин Тимаков. „Матĕрне инкен мулĕ“ калав. Марк Аттай. „Мулкачсем“, „Такапа шапа“ юптарусем
Çынсен ĕç-хĕлĕнчи, ăс-тăнĕпе чун кăмăлĕнчи сивлек пулăмсемпе илемсĕр енсене питлени сывă палăрăмсене хӳтĕлени. Хаклăх-пахалăх ăнкарăвне тарăнлатасси. Çыравçăсен сăнарлă шухăшлавĕ тата сăнар калăплас .

**3. Чăваш çыравçисем Тăван çĕр - шыв, тăван чĕлхе çинчен .**
Çеçпĕл Мишши. „Чăваш чĕлхи“ сăвă. Ухсай Яккăвĕ. „Чăваш чĕлхи“ сăвă. Александр Артемьев. „Хунавлах хăрнисем“ повесть сыпăкĕ. Петĕр Хусанкай. „Йыхрав“ сăвă, „Эпир пулнă, пур, пулатпăр!“ сăвă, „Тăван çĕр-шыв“ поэма сыпăкĕ, „Çуралнă çĕр-шывра“ сăвă. Аркадий ,çхĕл. „Çут çанталăк“ сăвă. Степан Аслан. „Тăм“ калав. Антип Николаев. „Алеша ыйхă шырать“ калав. Юрий Сементер. „Эпир чăвашсем чăваш пулатпăр“ сăвă. Василий Игнатьев. „Ичек“ калав. Григорий Лукин. „Хĕвел, ялан эс пирĕнпе“ сăвă. Анатолий Ырьят. „Эп - чăваш“ сăвă.
Тăван çĕр-шыва куç шăрçине упранă пек сыхлани. Чĕлхе - халăх ăсне, пĕлĕвне, кăмăлне упракан пурлăх. Тăван чĕлхе сăнарлăхĕ, шăхвăртулăхĕ, илемĕ. Тăван çĕр-шывшăн, тăван чĕлхешĕн кĕрешекен сăнарсем. Характер çирĕплĕхне, чăтăмлăхне, чун-чĕре çулăмне психологиллеçивĕч те тарăннăн сăнлани.

**4 . Ч ă в а ш ç ы р а в ç и с е м й ă л а - йĕркепе с о ц и а л л ă п у р н ă ç р и , о б щ е с т в ă р и интернационаллăх, культурăлăх, чăтăмлăхпа туслăх çинчен .**
Ираида Петрова. „Татюк“ кĕнекери хайлавсем. Николай Симунов. „Салам кала“ калав. „Сурпан тĕрри“ драма сыпăкĕ. Вениамин Тимаков. „Аттемĕрсен сăваплă çĕрĕ“ повесть сыпăкĕ. Розин Ярандай. „Ют йĕр“, „Хветĕр Илем сехечĕ“, „Çухалнă блокнот“ („Кĕмĕл сулăллă сехет“) повесть сыпăкĕсем. Георгий Ангер. „Йăнăш“, „Çын аллипе çĕлен ан тыт“ калавсем. Виталий Енĕш. „Хăлăх“ шӳт (кулăш). Владимир Ухли. „Пĕрремĕш сăвă“ калав. Александр Белов. „Пулăра“ пьеса-сценка. Николай Исмуков. „Асамат кĕперĕ“ сăвă. Архип Александров. „Пирĕн лагерь“ калав.
Çивĕч гражданлăх, героизмпа патриотизм, тĕрлĕ халăхсен пĕр шухăшлăхĕ. Хăравçăлăха тата çынпа обществăна сиен кӳрекен ĕçсене сивлени. Çыравçăсем шанăçпа мăнаçлăх, паттăрлăхпа интернацилĕх туйăмĕсене палăртни. Тулашри (çынсем хушшинчи) тата çыннăн шалти (чун-чĕринчи) хирĕçӳсем. Хайлаври хирĕç тăру йĕрĕсем.

**5 . Ч ă в а ш ç ы р а в ç и с е н с ă н а р л ă т а в и т ĕ м л ĕ с ă м а х ĕ э т е м ĕ н к улленхи пурнăçри вырăнĕ.**
Стихван Шавлы. „Вĕçкĕн Ваççа“ шӳтлĕ сăвă. Александра Лазарева. „Урок пуçланчĕ“ калав. Альберт Канаш. Кун кĕнекинченчи (пуплев, сăмах, хаçат чĕлхи çинчен калана шухăшсем). Митта Ваçлейĕ. „Виçĕ Хăват“ сăвă. Марина Карягина. „Сăвап“калав. Виталий Енĕш. „Сăмах. Çăкăр. Парăм“ тĕрленчĕк. „Чун кăварĕ“ Повесть сыпăкĕ. Петĕр Хусанкай. „Сăмах хăвачĕ“ сăвă. Александр Клементьев.“Дежурный сăвăсем“, „Юлашки тĕл пулу“ калавсем. Ева Лисина. „Яка пыр“, „Хуйхă“, „Яшка витĕр“, „Шăнкăртам курăнать“ калавсем. Николай Ишентей. „Шур шухăш“, „Икĕ Вут хушшинче“ сăвăсем. Георгий Ефимов. „Лина Петровна“ калав. Розин Ярандай. „Хура хуртсем“ детективлă повесть сыпăкĕ. Сăмах, хутшăну, пуплев - пурнăç тĕллевĕ, малалла чĕнекен хăват. Чун, ăс пуянлăхĕ Чĕлхе (пуплев) культурине палăртни. Сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшĕсем. Кăмăла пĕлтермелли, тĕрлĕ лару-тăрура, пулăмра, ĕç-хĕле сăнарлă, витĕмлĕ калаçмалли майсене пĕлни.

**6.Чăваш çыравçисем ăс - хакăлпа чун - чĕре килĕшӳлĕхĕ çинчен.**
Юрий Скворцов. «Пушмак йĕрĕ» калав. Иван Егоров. „Куç çути“ калав. Мархва Трубина. „Ача чухнехи“ повесть сыпăкĕ. Любовь Мартьянова. „Пуçтахсем“ калав. Григорий Краснов-Кĕçĕнни. „Кам ытларах айăплă.“ калав. Виталий Енĕш. „Чун кăварĕ“ повесть сыпăкĕ. Денис Гордеев. „Тиллит-тиллит Микулай“ калав. Илпек Микулайĕ. „Тимĕр“ роман сыпăкĕсем. Николай Айзман. „Кăмăллă кӳршĕ“, „Парăм“ пьесисем.
Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсем çынлăх, чунлăх (гуманизм), ыйтăвĕсене çивĕччĕн хускатни. Этем ăс-хакăлĕ - кивçен туянми пуянлăх пулнине сăнарлани. Илемлĕ Хайлавсем - çын чунне, шалти тĕнчине уçса кăтартакан сăмах ӳнерĕ. Сăнарсен танлаштаруллă характеристики. Психологиллĕ Сăнлăхсем, ăшри монолог, лирика çаврăмĕсем сăнарсен характерне вăйлатни.

**7. Чăваш çыравçисем общество пурнăçĕнчи кăмăл - сипет йĕркине пăхă нса çирĕпленнĕ нормăсемпе йĕркесем (тивĕçсем) çинчен.**
Николай Терентьев. „Кĕмĕл пĕлĕтсем“ пьеса. Григорий Луч. „Чун туйăмĕ“ калав, „Ăçта эсĕ, ылтăн кайăк.“ повесть сыпăкĕ. Мĕтри Кипек. „Кайăк тусĕ“ повесть сыпăкĕсем. Михаил Белов. „Пулăра“ пьеса. Александр Галкин. „Чĕрĕ парне“ поэма. Валентина Элпи. „Сĕмсĕркке“ инсценировка. Е. Афанасьев. „Йĕплĕ чечексем“ пьеса. Надежда Ильина. „Турăсăр тупнă телей“, „Даниил“ калавсем. Алексей Медведев. „Ман юлташ Ромео“ калав. Леонид Агаков. „Чи хакли“ повесть сыпăкĕ.
